Чăваш халăх поэчĕ Порфирий Афанасьев

Çынлăхпа чунлăха çухатас марччĕ

КĔСКЕН

Порфирий Васильевич Афанасьев 1942 çулхи нарăсăн 20-мĕшĕнче Тутарстанри Çарăмсан районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмелĕ ялĕнче çуралса ÿснĕ. Шкул пĕтерсен Хусанта тухса тăракан "Хĕрлĕ ялав" ("Ленин ялавĕ") хаçат редакцине ĕçе вырнаçнă. 1964 çулта Хусанти Педагогика институчĕн филологи факультетĕнчен вĕренсе тухнă. Пĕр вăхăт Çĕнĕ Йĕлмелĕ вăтам шкулĕнче ĕçленĕ, каярах Çарăмсан районĕн "По ленинскому пути" хаçат редакторĕн çумĕ пулнă. 1967 çулта Шупашкара куçса килнĕ. "Коммунизм ялавĕнче" (хальхи "Хыпар") литсотрудник, пай пуçлăхĕ, "Хатĕр пул" (халь "Самант") журналăн, Чăваш кĕнеке издательствин тĕп редакторĕ пулса ĕçленĕ. Чăваш писателĕсен пĕрлĕхне ертсе пынă, Чăвашрадион тĕп редакторĕнче вăй хунă. Раççей Мир фончĕн Чăваш уйрăмĕн председателĕн çумĕ, Пичетпе информаци патшалăх комитечĕн председателĕн çумĕ пулнă. 2001 çултанпа – Чăваш Республикин 1-мĕш класлă Патшалăх советникĕ, Халăхсем хушшинчи пĕр кăмăллăх пĕрлĕхĕн пĕтĕм тĕнчери академийĕн академикĕ.

"Çарăмсан кĕввисем" (1975), "Хуркайăк çулĕ" (1976), "Чун çути" (1980), "Пурăн, юрату" (1985), "Сан ятупа" (1986), "Хĕвел хапхи" (1988), "Тав" (1998), "Юрату çĕршывĕ" (2002) тата ытти кĕнекесен авторĕ.

Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премийĕн лауреачĕ (1982), Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ (1992), Чăваш халăх поэчĕ (1998), Чăваш патшалăх премийĕн лауреачĕ (2001).

"Ачалăха, туссем, кирек мĕн тăвăр, эпир куратпăр тĕлĕкре анчах..." Çак сăмахсемпе вĕçленет Порфирий Афанасьевăн "Тĕлĕкпе чăнлăх" сăвви. Нарăсăн 20-мĕшĕнче çитмĕл çул тултаракан чăваш халăх поэчĕ пурнăç çулĕпе сулмаклăн утать, тус-юлташĕсемпе çыхăну тытать, çĕнĕ шухăш-кăмăлне сăвăласа-шăрçаласах тăрать. Нумай пулăм çине ача куçĕпе пăхма, тĕнче асамне асăрхама пăрахман, чунĕпе халь те çап-çамрăк. Чăннипе, пĕтĕм ум сăмаха унăн сăввисенчен илнĕ йĕркесемпех çырма пулать: "Курма, илтме пĕлсессĕн, çут çанталăк – пин çутăллă, пин кĕвĕллĕ илем. Çавна куллен çынна астутармалăх, çав илемпе чуна савăнтармалăх çут тĕнчене килеççĕ поэтсем". Мĕн тĕллевпе пурăнать-ши пултаруллă çын? Мĕн савăнтарать-ши ăна? Мĕн кулянтарать тата? "Тăван Атăл" вулаканĕсен сăвăçă чун уçса каласа панипе паллашма май пур.

Атте сахăрĕ

Кашнин хăйĕн шăпи çав. Çитмĕле пурăнса çитесси çинчен шутлама та пултарайман эпĕ, сăпкарах вилсе выртма пултарнăскер...

Çичĕ ача çуратнă анне, анчах пурте çитĕнсе ĕлкĕреймен нушаллă саманара.

Мăшăрĕпе Валентина Ивановнăпа

Амăшĕпе Анастасия Васильевнăпа

Чăваш çыравçисем Çăлтăр хулинче. 1988 ç.

Франци поэчĕпе Леон Робельпе тата Геннадий Айхипе.
1988 ç.

1959 ç.

Виçĕ аппа çеç сывă юлайнă. Тăваттăн ӳснĕ эпир, эпĕ – чи кĕçĕнни. Аттене вăрçă пуçлансанах фронта илсе кайнă. Эп çуралнине çинчен вăл вăрçăра чух пĕлнĕ.

Пĕр-ик уйăхра чух питĕ вăйлă чирлесе ӳкнĕ иккен эпĕ, часах вилес пек.

Кӳршĕре пурăнакан юмăç карчăкĕ те мана пурăнма пултаракан ача вырăнне хуман тет. Пăхнă тет те ман çине: "Ачу пурăнмалли çын мар сан", – тесе хунă аннене. (Астăватăпха, хăраттăмăрччĕ эпир вăл карчăкран ача чухне.) Манăн юнра глюкоза çитмен пулнă иккен. Кам пĕлсе тăнă ун чух ун пек япаласене. Вăхăчĕ йывăр пулнă, кăкăр ĕмĕртекен аннем апат-çимĕçне те çителĕклĕ курсах та кайман ĕнтĕ.

Илмень кӳлли хĕрринче çапăçнă чух атте аманнă та темиçе уйăх госпитальте сипленнĕ хыççăн киле таврăннă. Хăй çиес сахăр татăкĕсене ачисем валли илсе килнĕ. Эпĕ те мĕн пултарнă таран ĕмсе выртнă çав сахăр татăкне. Каярах анне каласа панă тăрăх, пĕр эрнеренех вăй илнĕ эпĕ.

Ватлăхра килнĕ ывăлĕ чĕрĕ юлнăшăн савăннă ĕнтĕ вара вĕсем – анне 44-ра пулнă вĕт мана çуратнă вăхăтра. Пиллĕкрех вула-

Чăваш çыравçисемпе Мускавра. 1988 ç.

Пăлхар çыравçисемпе Ижо Соколовпа, Красин Химирскипе тата Юрий Сементерпе пĕрле. Шупашкар. 1996 ç.

ма-шутлама вĕреннĕ иккен эпĕ. Шкула хирĕçех пурăнаттăмăр та иртерех янă мана вĕренме. Анне ман пирки пăшăрханса учительница патне те кайса ыйтнă: "Ирхине пит йывăр тăрать те шкула тепĕр çул çĕнĕрен ямалла мар-ши ăна?" Устинья Михайловна Егорова, ман пĕрремĕш вĕрентекен, çапла хуравланă аннене: "Ун пек маттур та тавçăруллă ача тата ăçтан тупас вара манăн? Ку класрах пултăр".

Чӑн чӑваш ялӗ

Аппасем 5-7 класран ытларах вӗренмен. Аннепе атте хӑйсем те вӗреннӗ ҫынсемех пулман. Атте вӑрҫӑран янӑ ҫырӑвӗсене вуланӑччӗ, ҫырма йӗркеллӗ хӑнӑхайман вӑл: кашни сӑмахра темиҫе сас палли сиктерсе ҫырнӑ. Анне 30-мӗш ҫулсенче ликбез шкулне ҫӳрекеленӗ, хаҫат е кӗнеке ячӗсене такӑна-такӑна вулатчӗ. Ҫав вӑхӑтрах вун-вун чӑваш юрри пӗлетчӗҫ хӑйсем. Маншӑн самай тӑрӑшнӑ вара вӗсем – ывӑлӗ та пулин вӗрентӗрех тенӗ ӗнтӗ.

Шкул библиотекинче мӗн пур кӗнекене кӗҫӗн классенче вӗреннӗ чухнех вуласа тухнӑччӗ эпӗ. Ухсайӑн "Кӗлпук мучине", Хусанкайӑн "Тӑван ҫӗршывне" каҫса кайса вулаттӑм. Хусанкая хӑйне ҫыру та янӑччӗ ун сӑввисене ытараймасӑр, халь вӑл архивра упранать.

Сӑвӑсем ун чухнех ҫырма пуҫланӑ, ирӗклӗ темӑпа сочиненисемпе те кӑмӑлпах ларатттӑм. Районти хаҫат вырӑсла тухатчӗ. Хусанта ҫеҫ "Хӗрлӗ ялав" чӑвашла пичетленетчӗ. Виҫҫӗмӗш класра вӗреннӗ чухнех унта ҫырусем яма пуҫларӑм.

Ачалӑха аса илме питӗ ырӑ ҫав. Мӗн тери илемлӗ вырӑнта вырнаҫнӑ пирӗн хӑйне евӗрлӗ ял! Халь Ҫӗнӗ Йӗлмелӗ ялне пӗтӗм чӑваш тӗнчи пӗлет. Кунта пурӑнакансен ҫурри – тӗне кӗнисем, тепӗр ҫурри – чӑн чӑвашсем. Авалхи тӗне вӗсем халӗ те ҫирӗп тытса пыраҫҫӗ. Студентсем, тӗпчевҫӗсем час-часах ҫӳреҫҫӗ вӗсем патне, чӑваш масарӗнчи палӑксене тишкереҫҫӗ, йӑла юррисене ҫырса илеҫҫӗ. Юнашарах тутар, мӑкшӑ, вырӑс ялӗсем нумай пулин те, ҫак чӑваш ялӗ нихӑҫан та никама та пӑхӑнман, яланах хӑйӗн йӑли-йӗркипе пурӑннӑ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче тӑван чӗлхене хӗсӗрленӗ чухне те шкулта чӑваш чӗлхи урокӗсем манӑҫман, тен, ытти ҫӗртинчен те тарӑнрах, анлӑрах вӗрентнӗ. Мӗншӗн тесен манӑн учительсем хӑй вӑхӑтӗнче Аксу педучилищинче Ефрем Эллиев писатель патӗнче пӗлӳ илнӗ.

Вӗрентекенӗмсене тав туса аса илес килет. Вӑрҫӑ инваличӗ Лаврентий Егорович Соленцов заметкӑсем ҫырма хӑнӑхтарчӗ. Стена хаҫатне пурте пӗрле хатӗрлеттӗмӗр. Пиллӗкмӗш класа куҫсан литература кружокне ҫӳреме пуҫларӑм. Ӑна Мария Харитоновна Емендеева, тӗне кӗмен чӑваш хӗрарӑмӗ, ертсе пыратчӗ. Алӑпа ҫырсах "Ҫӑлтӑр" журнал кӑларатттӑмӑр.

Дмитрий Михлеев кинорежиссер, поэт, художник кӑҫал кӑрлачра хӑйӗн юбилейне уявларӗ. Эпир унпа пӗр парта хушшинче ларнӑ шкулта. Пӗр-пӗринпе ӑмӑртса сӑвӑ ҫыраттӑмӑр. Хӗрсем ҫинчен шӳтлесе-кулкаласа эпиграмма таврашсем ҫырни те пулнӑ – хӑшӗсем куҫҫуль кӑларсах класран тухса таратчӗҫ.

Физикӑпа астрономи урокӗсене Михаил Петрович Михеев ирттеретчӗ. Унӑн телескоп пурччӗ. Пӗтӗм шкул ачи ун патне чупатчӗ. Ҫӗрӗпех ҫӑлтӑрсене сӑнаттӑмӑр пӗрле. 1957 ҫулта космоса пӗрремӗш спутнике ярсан ӑна та курнӑ эпир ҫав телескоппа: мӗлт-мӗлт туса йӑлтӑртатса пыратчӗ... Пӗтӗм ял шавлатчӗ ун чух.

Пурнӑҫ темле те ҫавӑрттарать пире – Михаил Петровичпа кайран Хусанта тӗл пулнӑччӗ, вӑл ун чух аспирантурӑраччӗ. 1967 ҫулхи авӑн уйӑхӗнче вара, калаҫса татӑлнӑ пекех, иксӗмӗр те Шупашкара куҫса килтӗмӗр. Малтанхи вӑхӑтра ун хваттерӗнчех пурӑннӑччӗ.

Ирхи шӑнкӑрав

...Аттестат илнине ҫӗрӗпе пӗр класра вӗреннӗскерсемпе уявланӑччӗ, ҫырма хӗрринче кӑвайт чӗртсе калаҫса-юрласа ларнӑччӗ. Тул ҫутӑлас умӗн ҫеҫ киле

çитнĕччĕ. Çывăратăп ним çинчен шутламасăр... Анчах ирхине ирех вăратрĕç мана – ял Совет председателĕ Семен Иванович Иванов чупса çитнĕ иккен. Пăлханнипе хашкать хăй, "Обкомран сан пата шăнкăравлаççĕ", – тет.

"Хĕрлĕ ялав" хаçатăн тĕп редакторĕ Исаак Васильевич Скворцов ун чух бюро членĕччĕ, вăл шăнкăравлать иккен: "Паян мунча кĕр те, çамрăк тусăм, ыран Шунтал станцийĕнче Хусан пуйăсĕ çине лар. Сана кĕтсе илеççĕ кунта".

Володя Хавандеев юлташпа пĕрле çула тухрăмăр та аптрамарăмăр вара, чиперех çитрĕмĕр. Чылайăшĕ лайăх пĕлекен, хисеплекен Константин Петров кĕтме тухнă ун чухне мана. Ăна курсан савăнсах кайрăм – паллатăп та-ха. Вăл пирĕн шкула темиçе те килсе кайнăччĕ хаçат валли материал пухма.

Тÿрех ĕçе вырнаçтарчĕç çапла, редакцирех пĕр пÿлĕмре диван çинче тăватă уйăх çĕр каçса пурăнтăм. Хаçат кăларăмĕсем ал айĕнче, тем тĕрлĕ кĕнеке те пурччĕ. Каçхине мĕн тумалла тата – вуламалла!

Хам телее хам ĕненмесĕр пурăннăччĕ çав тапхăрта. Кашни кун мана хаçат редакторĕ И. Скворцов, В. Юдинпа К. Петров паллă писатель-журналистсем ĕç хушса тăраççĕ. Редакцие час-часах Н.В. Никольский профессор кĕрсе тухатчĕ, апат вăхăтĕнче иксĕмĕр шахматла выляттăмăр. В. Урташ, П. Хусанкай, Илпек Микулайĕ, А. Алка, Н. Евстафьев тата ытти чылай çыравçă килсе çÿретчĕ. Çак редакцирех Юрий Айташпа, Валем Ахунпа, Алексей Трофимовпа çывăх паллашрăм, туслашса кайрăм.

Аслă пĕлÿсĕр май килмест тесе редактор экзаменсене хатĕрленме хушнăччĕ. Кĕçех институтра вĕренме пуçларăм. Тутарсен тата вырăссен пулас поэчĕсемпе Ренат Хариспа, Равиль Файзуллинпа, Иван Даниловпа, Рустем Кутуйпа, Николай Беляевпа туслă пултăм. Шел пулин те, эпĕ студент чух чăваш хаçатне хупса лартрĕç.

Юлашки курсра вара авланса та ятăм.

Аннепе ун аппăшĕсем патне хăнана кайнăччĕ. Самар облаçĕнчи Мака Таяпи текен яла. Унта паллашнăччĕ пулас арăмпа. Учительницăччĕ вăл. Тÿрех килĕшрĕ мана. Малтан çыру çÿрететтĕмĕр... Тепĕр çулталăкран хĕллехи каникул вăхăтĕнче виçĕ ăйăрпа хĕр килĕшме тухса вĕçтертĕмĕр вара.

Мăшăрăм, Валентина Ивановна, вунă çул каялла çĕре кĕчĕ. Хĕрĕх çул унпа килĕштерсе, пĕрне-пĕри ăнланса пурăнтăмăр. Чылай сăвва ăна халаллань. Юрать пĕччен мар халь эпĕ – хĕрпе ывăл ÿссе çитсе хăйсем çемьеллĕ ĕнтĕ. Мăнуксем те пур.

Пурнăçра ачасенчен те нумай вĕренетĕн. Вĕсем пире пĕр-пĕрне упрама, ытти çын çинчен те шутлама хăнăхтараççĕ. Пĕр ывăл пирĕн вун иккĕре чух вилчĕ. Сăвăсем çыратчĕ ман пек. Çав трагеди те чуна хытарса малалла пурăнма вăй тупма вĕрентрĕ.

Чăвашлах çырас килетчĕ...

Институт хыççăн пĕр вăхăт шкулта ĕçлерĕм. Ачасемпе уроксем ирттерме питĕ килĕшетчĕ мана, ачисем те хама юрататчĕç тата. Каярах района чĕнсе илчĕç. Вырăнти тутар хаçачĕ валли çын тупнă, вырăсли валли кирлĕ иккен тата. Унта куçару енĕпе ĕçленĕ чух самай тутарла та вĕрентĕм те аванах ăнланма пуçларăм.

Анчах ман чăвашлах çырас килетчĕ.

Юрий Айташа тĕл пултăм пĕррехинче. Савнийĕ патне Пĕкĕлмене каятăп тет. Туспа часах уйрăлас килменнипе пĕрле кайрăмăр вĕт самолетпа ун савнийĕ патне. Мĕн çинчен кăна каласмарăмăр-ши çул çинче! Вăл Шупашкарта ĕçлетчĕ ун чух...

Чăваш Енех, Шупашкара куçса килмесĕр ĕç тухманнине ăнлантăмăр çак тĕл пулу хыççăн мăшăрăмпа.

Хаçатрах ĕç тупăнчĕ. "Коммунизм ялавĕнче" вăй хума пуçласан малтанхи виçĕ уйăхрах 18 района çитсе килтĕм. Ун чухнехи ял хуçалăх пайĕн ертӳçи Павел Иванович Иванов тĕрĕслесшĕн пулнă-ши ĕнтĕ мана? Кашни кун çыраттăм, хаçат çырăнтарас енĕпе чупаттăм.

Ĕçленĕ хушăрах партин аслă шкулне вĕренме ячĕç – çав тапхăра тепĕр университет пĕтернипе танлаштарма пулать пулĕ. Мускавра икĕ çул пурăнни халĕ те асра. Мĕн чул спектакль курмарăм пулĕ. Çавăнпа ĕнтĕ, театрпа сĕмленме пуçланипе, "Сан ятупа" сăвălla трагеди çырăнчĕ.

Халĕ те театрпа туслă. 15 пьеса чăвашла куçартăм. Мольерăн "Хыткукар", Шекспирăн "Ашкăнчăк инкесем", Лоркăн "Йерма", Шолоховăн "Лăпкă Дон" тата ытти драмăпа, комедипе ĕçлерĕм. Хальхи вăхăтра Чăваш академи драма театрĕн артисчĕсем "Ханума" (А. Цагарели) спектакльте уйрăмах çĕкленӳллĕ кăмăлпа выляççĕ.

Лекцисем итленисĕр пуçне мĕн чухлĕ интереслĕ ăслă çынпа тĕл пулман-ши Мускавра... Тĕрлĕ калаçу, тĕрлĕ шухăш... Пурнăç çине шухăшласа пăхма вĕрентрĕ çĕршывăмăрăн тĕп хули. Фидель Кастро пек пысăк политиксем хăйсен пурнăçĕ çинчен каласа панине итлеттĕмĕр те-ха. Тĕрлĕ çĕршывран килнĕ çынсем вĕренетчĕç партин аслă шкулĕнче.

Малтан вулама вĕренесчĕ

Чиновник та пулса куртăм. Тĕрлĕ енлĕ пултарулăхпа çыхăннă çынсем питех юратмаççĕ тĕрлĕ постра ларакансене, чăннипе, чиновник ĕçĕ – питĕ кирлĕ ĕç вăл. Мĕн пур çĕрте йĕрке пулмалла.

Пире самана суйласа илнĕ теме те пулать. Çав вăхăтрах пирĕн пек поэтсем хăй сăмахне калама пултарнă. Пиртен маларах кăшт урăхларах поэзи пулнă. Хальхи саманара тата урăх ятсем янăраççĕ.

Хальхи литературăра мĕн тери хитре калавсем, сăвăсем пур. Анчах идеологи çукки йăлтах пĕтерсе хурать, вĕсене пĕлтерĕшсĕр тăвать. Парти идеологийĕ мар, халăх идеологийĕ кирлĕ. Тасалăха хисеплени çитмест. Хăш-пĕр повеçе вулама çук – хĕрарăмпа арçын алхаснине каçса кайса сăнлаççĕ. Чиккине пĕлмелле мар-и вара? Çынлăхпа чунлăха мĕнле сыхласа хăварасси çинчен каласчĕ те вĕт.

Çамрăк çыравçăсен литература ăстисен хайлавĕсене вуламаллах. Вĕсем çав-çав произведение мĕнле çырни çинчен кăна мар, мĕншĕн çырни çинчен те шухăшламалла. Вулама ӳркеннине час-часах асăрхатпăр халь. Чи малтан вулакан пулмалла.

Чăн-чăн вулакан пиçсе тухмасăр çыравçă пулаймастех пуль çынран...

Пичете Надежда ОСИПОВА хатĕрленĕ